Геннадий Юмарт

Хурлăхлă пурнăç шухăшĕ

Ваççа Аниççи çуралнăранпа — 115 çул

Ку юбилей çулталăк пуçламăшĕнче лекет. Ваççа Аниççи кивĕ стильпе 1892 çулхи раштавăн 25-мĕшĕнче çуралнă. Çăнĕ стильпе вăл — кăрлачăн 7-мĕшĕ. Кăçалах тепĕр хĕрарăм-çыравçă Марфа Трубина çуралнăранпа 120 суя çитет.

Асăннă çынсене иккĕшне те чăваш литературинчи малтанхи хĕрарăм çыравçăсем тесе калама тивет.

Ваççа Аниççи хăйĕн "Иртсе кайнă кун-çулăм" аса илĕвĕнче çапла пĕлтерет: "Пĕрремĕш сăвва «Усал пуп» ятпа 1904 çулта çыртăм". Ăна автор çийĕнчех пĕрле вĕренекенсене вуласа панă.

1905-1906 вĕренӳ çулне Аниççа Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ирттернĕ. Çăв тапхăрта вал "Тимĕрçсен", "Çуркунне", "Хĕрачана шкула вĕренме ямаççĕ" сăвăсене çырнă-мĕн. Пĕр литературăпа музыка каçĕнче вăл К.Иванов сцена çинче вуланине итленĕ хыççăн И.Крыловăн "Шăрчăкпа Кăткă" юптарăвне вырăсла каласа панă. Ун чухне Аниççа аслăрах класра вĕренекен Марфăна пĕлкеленĕ те пулĕ, анчах пĕр-пĕринпе хутшăнни çинчен асăнни çук. 1978 çулта больницăра выртакан ватă сăвăçран çакăн çинчен ыйтса пĕлме чухлаймарăм.

Марфа Чĕмпĕрте 1903 çулта вĕренме тытăннă. Малтан вăл вырăс прозине юратса вуланă, 1904-1905 çулсенче поэзие кăмăлларах панă. А. Хольцов кĕнекине тупсан ăна вăл çийĕнчех пилĕк хугчен вуласа тухнă та хай те сăвăсем çырма пикеннĕ. 1904 çул

пуçламăшĕнче К.Иванов хăйсемпе тăван хĕр /ашшĕн йăмăкĕ/ вилни çинчен сăвă çырнă. Çав хыпар пĕрле вĕренекенсен хушшинче сарăлсан Марфа çамрăк сăвăç япалисемпе паллашас тесе чиркӳри кĕлĕ вăхăтĕнче Кĕçтукăн альбомĕпе вăрттăн паллашнă.

Марфа Трубинапа Ваççа Аниççин пурнăçĕпе пултарулăхĕнче ытти пĕр пеклĕх те пур. Вĕсем иккĕшĕ те ĕмĕрне ачасене шкулта вĕрентсе ирттернĕ, çĕре кĕрипченех çыравçă ĕçне пăрахман. Иккĕшĕ те литературăн тĕрлĕ анинче вăй хунă. Сăвăсăр пуçне вĕсем проза хайлавĕсем те çырнă, илемлĕ куçару ĕçне те хутшăннă. Акă Чĕмпĕрте вĕреннĕ чухне Марфа Л.Толстой калавĕсене вырăсларан чăвашла 250 страница ытла куçарнă /сăмах шкул тетрачĕ çине çырни çинчен пырать/. Кайран вĕсене редакцилесе Л.Толстойăн 1907 çулта тухнă вулав кĕнекисене кĕртнĕ пулас. Çак ĕç тăлмача калав-юмах çырма хавхалантарнă. Ваççа Аниççи те çамрăклах сăвăсем куçарнă.

Сăмахăм çыравçăсен малтанхи сăввисем çинчен кăна-ха. Уйрăмах акă мĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ: авторсем халăхăн йывăр хуйхи пирки шухăша кайнă. Унта вăйă-кулă, шӳт-хаваслăх кĕввисем пачах илтĕнмеççĕ. Хĕрарăмсем те çапла хăюллăн сас пани савăнтарать. М.Трубина 1906-1908 çулсенче çырнă сăвăсенчен виççĕшĕ кăна упранса юлнă. 1909 çулта Чĕмпĕртен вĕренсе тухнă хыççăн хĕр-сăвăç хăй çырнисене К.Иванова кăтартма шутланă, ун пирки иккĕш калаçса та татăлнă. Шел, тӳр килмен. Марфăн маларах хăюлăхĕ çитеймен пулас. "Нарспи" авторĕ вăл çырнисемпе паллашнă хыççăн чылай ырă канаш панă пулĕччĕ, вара Марфăн хăй çырнисене, тен, пĕтерес те çукчĕ. Мĕн упранни те хаклă. "Елик" сăвăра çармăса ирĕксĕр качча паракан хĕр Атăла сиксе вилет /1906/. Тепĕр икĕ сăввине 1908 çулта çырнă. "Вилĕм" ятлинче пытару йăли çинчен каланă, автор вилĕм çинчен йывăр шухăша путать. "Чухăн çын" сăвăра хăлтăр-халтăр çуртри выçăлла-тутăлла пурнăç çинчен сăмах пырать. "Хурлăхлă пурнăç шухăшĕ пуçран каймасть", — тет автор мĕскĕн чăваш пирки.

Ваççа Аниççин ку тапхăрти "Ялта" сăввинче, "Хура халăх" поэминче тата куçарнă тĕслĕхсенче те хайхи "хурлăхлă пурнăç шухăшĕ" тĕпре тăрать. Унта та 'Чухăн çын" сăвăри ӳкерчĕксемех, анчах урăх сăмахсемпе сăнланă. Хĕр куçĕ ытларах хĕрарăм ĕçне-хĕлне çивĕчрех, анлăрах курать /макăракан ачана йăпатни, пир тĕртни т.ыт.те/. Ваççа Аниççи тертлĕ пурнăç çинчен каланипе çеç çырлахмасть. Вăл ĕç çыннин хăйĕн çине тăма кирлине асăрхаттарать. "Çын асаплă пурăнни хăйĕнченех килет", — тесе çирĕплетет. Çапла вăл 1905-1907 çулсенчи революци юхăмĕ кĕрешĕве чĕннине хăйне

май палăртать. Г. Гейнерен куçарнă "Камран пулăшу ыйтас?" сăвăра та çак шухăш-туйăм: пулăшăва чи малтан хăвăнтан кĕтмелле иккен.

Ваççа Аниççин асăннă виçĕ хайлавĕ 1907 çулта "Хыпар" хаçатра пичетленме ĕлкĕрнĕ. Кĕçех унăн хăйне хавхалантарса пынă Тăваньялсем Сергейрен уйрăлма тивнĕ, Мелеккес енне ĕçлемелле пулса тухнă. Çырас-куçарас ĕçе пачах пăрахман-ха вăл, анчах литература пурнăçĕнчен аякра тăнă. Ватлăхра сăвăç çырав ĕçне çĕнĕрен кӳлĕнет. Çак енĕпе ăна журналистсемпе çыравçăсем нумай пулăшнă. 1904-1907 çулсенчи сăввисем экспромтла çырнă пек туйăнаççĕ. Вĕсене çичĕ сыпăклă силлабикăпа кĕвĕленĕ. "Хура халăх" поэмăра ăна çирĕпех тытса пыманни те тĕл пулать. Поэзи ăсталăхне ятарласа вĕренменскертен нумаях ыйтаймăн. Чи пахи — пичетре сас пама хăюлăх çитерни.

Марфа Трубина ун чухнехи сăввисене сулмаклăрах та тирпейлĕрех çырнă. Авторăн пĕлĕвĕ те, хăнăхăвĕ те ытларах пулни сисĕнет. Вăл нумайрах сыпăклă силлабикăпа кĕвĕлет, халăх юррисемпе тата халапĕсемпе усă курать /"Арçури" халапа та сăвăлама пуçланă/. Унăн рифма-састаш тăвас тимлĕхĕ те палăрать.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче хамăр регионти халăхсен йышĕнче хĕрарăмсенчен чи малтан шăпах Марфа Трубинапа Ваççа Аниççи поэзире сас панă. Тутарсемпе пушкăртсен малтанхи поэтессисем кăшт каярах курăнма пуçланă. Тăван поэзи малтанхи чĕкеççен сассисер кичемрех те чухăнрах пулĕччĕ.

«Çамрăксен хаçачĕ», 2008, 5 (5682) №